27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944
АВГУСТ
11
ЭРНЕКУН
157(6652) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Чи малтан çапнă паха тырра — государствăна!

Пирĕн тăван аттесемпе пиччесем, упăшкисемпе ывăлсем, шăллăмсемпе тантăшсем хамăрăн аслă çĕршывăн ирĕклĕхĕпе телейне хÿтĕлеме фронта тухса кайрĕç. Вĕсем хăйсен вăйĕпе пурнăçне те шеллемесĕр, нимĕнле йывăрлăхсем умĕнче те хăраса тăмасăр, кунĕн-çĕрĕн фашистла нимĕç вăрă-хурахĕсене хирĕç кĕрешеççĕ, пире пусмăра кĕртсе ÿкерме хапсăннă тăшмана ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыраççĕ, ăна пирĕн таса çĕр çинчен хăйĕн йăви патнелле хăвалаççĕ.

Çав вăхăтрах пирĕн фабрикăсемпе заводсенчи тăвансем фронтри тантăшсем валли тĕрлĕ хĕçпăшалсемпе боеприпассем, самолетсемпе танксем тата ытти вăрçă техникипе тумтирсем туса фронта ăсатаççĕ. Вĕсем те, фронтри тăвансем пекех, хăйсен вăйне шеллемесĕр тата куннеçĕрне пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, фронта мĕн кирлине çителĕклĕ таранах туса пама тăрăшаççĕ.

Анчах пĕр хĕçпăшалпа кăна тăшмана çĕнтерме çук. Фронтри тăвансем тăшмана хирĕç паттăрăн кĕрешчĕр тесен, фабрикăсемпе заводсенчи тантăшсем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетчĕр тесен, вĕсене мĕн кирлĕ-ха? Вĕсене пуринчен малтан çăкăр, апатçимĕç кирлĕ. Çапла вара, колхозниксемпе колхозницăсен тата ялхуçалăхĕнчи мĕнпур работниксен чи ответлă та чи хисеплĕ задачи вăл — фронтри воинсем валли, промышленноçпа чугун çул рабочийĕсем валли тырпул тата ялхуçалăх продукчĕсем çителĕклĕ таран парса тăрасси пулать.

Çавăнпа та ĕнтĕ эпир уйхирсенче вăй шеллемесĕр ĕçлени, эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илсе государство умĕнчи парăмсене вăхăтра парса татни чылай енчен фронтри кĕрешĕвĕн ăнăçлăхне татса парать. Ахальтен мар СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ çапла кăтартса пачĕç: государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем вăхăтра та пĕтĕмпех парса татасси — партипе совет организацийĕсен, [illegible] колхозсемпе совхозсен тата подсобнăй хуçалăхсен ертÿçисен [illegible].

[illegible]

Республикăри колхозсем [illegible] государствăна тырă парас ĕçе [illegible].

[illegible] Вăрмар районĕнчи колхозсем 690 центнер, Октябрьски районĕнчи колхозсем 670 центнер çĕнĕ тырă панă. Елчĕк районĕнчи Ворошилов ячĕллĕ колхоз 1944 çулта ыраш памалли обязательствине пĕтĕмпех тултарнă, [illegible] государствăна 42 центнер çĕнĕ тырă панă. Вăрмар районĕнчи «Красная кубня» колхоз [illegible] бригада 12 лаша панă. Çак бригада халĕ кашни кун кашни пунктне 38-шар центнер тырă леçсе тăрать. Калинино районĕнчи «Первомайский» колхоз государствăна ыраш памалли плана тултарнă та ĕнтĕ.

Кун пек примерсем нумай илсе кăтартма пулать, анчах çакă вăл республикăра государствăна тырă парас ĕç çителĕклĕ хăвăртлăхпа пулса пынине пĕлтермест-ха. Пачах урăхла, ку ĕç халĕ тÿсме çук вăрахăн пулса пырать. Нумай районсемпе колхозсем государствăна тырă тăратас тĕлĕшпе панă пилĕккунлăх заданисене тултарса пымаççĕ. Тырă вырма тытăнман колхозсем халĕ çук та ĕнтĕ, нумай колхозсем кĕрхи тырăсене вырса пĕтерсе çурхи тырăсене вырма тытăнчĕç. Анчах государствăна тырă парса татнă колхозсем вара питĕ сахал. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен пур ĕçсене те пĕр вăхăтрах туса пыма хăнăхман руководительсем чылай-ха пирĕн, вĕсем ĕçе черетпе тума вĕреннĕ: вĕсен йăлипе паян тырă вырмалла, ыран авăн çапмалла, тепĕр кунне тин государствăна тырă леçсе памалла. Ун пек юлташсем васкама юратмаççĕ: вуншар кун тырă выраççĕ, вуншар кун авăн çапаççĕ, 20—30 кун иртсен тин государствăна тырă пама тытăнаççĕ. Çакăн пек руководительсем вара час-часах государствăна хирĕçле çул çине те тăраççĕ. «Тырă нÿрĕрех-ха, симĕс пĕрчĕсем нумай, лашасем те пушанаймарĕç» тесе, тырра юрнех ытти çĕре тăкаклаççĕ е колхозниксене валеççе параççĕ, тырра тасатса типĕтес ĕçе организацилемеççĕ. Акă пĕр-икĕ пример. Советски районри «Самолет» колхозра 21 центнер, Сĕнтĕр районĕнчи Войков ячĕпе тăракан колхозра 7 центнер, Элĕк районĕнчи «Хăват» колхозра 30 центнер çĕнĕ тырра колхозниксене валеççе панă, çав вăхăтрах государствăна вăл колхозсем пĕр пăт тырă та паман-ха. Комсомольски районри «Культура» колхоз иртнĕ çул государствăна 52 центнер тырă парса çитереймен. Кăçал ыраш 150 гектар ытла вырнă, вăл тырăран 100 пăт тырă çапса илнĕ те колхозниксене, вăл шутрах ĕçкунĕсен минимумне тултарманшăн судпа айăпланă 13 колхознике те, валеççе панă. Ку колхозăн государствăна утă 42 центнер памалла, анчах, утă çулса пуçтарнă пулин те, пĕр килограмм та леçсе паман. Мĕнле хакламалла-ха ĕнтĕ çак колхоз председателĕн Козловăн ĕçне? [illegible]

[illegible] хозниксене çакна ăнлантарса памалла: эпир тырпулсене хăвăрт пухса кĕни, государствăна тырпул тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли плансене правительство кăтартнă срокченче тултарни—тăшмана татăклăнах аркатса тăкассишĕн, хамăрăн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе телейĕшĕн кĕрешни пулать.

Польшăн наци совечĕн председателĕ Б. Берут господин тата Польша халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен Комитетăн председателĕ Э. Осубка-Моравский господин Мускавран тухса кайни

Августăн 9-мĕшĕнче Польшăн наци совечĕн председателĕ Болеслав Берут господин, Польша халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен Комитетăн председателĕ Э. Осубка-Моравский господин, Польша халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен комитет Председателĕн заместителĕ А. Витос господин, Польша çарĕсен главнокомандующийĕ генерал-полковник М. Роля-Жимерский тата ыттисем те Мускавран тухса кайнă.

Мускав аэродромĕнче Б. Берут, Э. Осубка-Моравский господинсене тата вĕсемпе пĕрле килнĕ çынсене СССР Ют çĕршыв Еçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский, СССР Наркоминделĕн Европăн 4-мĕш отделĕн заведующийĕ В. А. Зорин, СССР Наркоминделĕн Протокол отделĕн заведующийĕн ĕçĕсене туса тăраканĕ Г. И. Фомин, Оборона Халăх Комиссариачĕн тулти çыхăнуçен отделĕн начальникĕ генерал-майор В. Н. Евстигнеев, Мускав хули коменданчĕ генерал-майор К. Р. Синилов тата ыттисем те ăсатса янă.

Ăсатса янă чухне хисеплĕ хурал тăратнă тата Польшăпа Совет Союзĕн государство гимнĕсене каланă.

Аэродрома Польшăпа Совет Союзĕн флагĕсемпе илемлетнĕ.

И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул çитнĕ тĕле

СССР Совнаркомĕ Демьян Бедный юлташа вырăссен аслă поэчĕ-баснописецĕ И. А. Крылов вилнĕренпе 100 çул тултарнине уявлама тунă Пĕтĕм Союзри Комитет Председателĕн заместителĕ [illegible] ĕçлеме [illegible].

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ И. А. Крыловăн пĕтĕм сочиненийĕсене пичетлесе кăларма йышăннă. Çав сочиненисен редакторĕ пулма Демьян Бедный юлташа лартнă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

АВГУСТĂН 8-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре çаплах наступлени туса пынă, КРУСТПИЛС хулипе чугун çул узелне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 50 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ЛАПЕНЫЭКИ, СТЫРНА, КАПЛАНЫ, ИНДАНЫ, ДУПЕНЫ, АНДУЖИ, УПЬЮСАРГИ, КАКТЫ, ЗИЛАНИ ятлă пысăк ялсем тата АЙВИЭКСТЭ, ЗИЛАНИ ятлă чугун çул станцийĕсем.

ДАУГАВПИЛС (ДВИНСК) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 70 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ЗАСА, МЕЖАРАУПЭС, АКНИСТЭ, ГАНУШИШКИ, МАЙНЕВОС, ПАНЕМУНИС, ВИЛКОЛЯЙ, СУВАЙНИШКИС, КВЕТКИ, ГАЮНАЙ ятлă пысăк ялсем тата ЗАСА, АКНИСТЭ, ПАНЕМУНИС, СУВАЙНИШКИС ятлă чугун çул станцийĕсем.

БИРЖАЙ хули районĕнче виçĕ кун каярах тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсем пирĕн çак районра наступлени туса пыракан çарсене хирĕç контратакăсем пуçласа янă. Хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн çарсем тăшманăн пур контратакисене те ăнăçлăн сирсе янă та çĕнĕрен наступлени пуçласа ярса халăх пурăнакан 80 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — СПАЛВИШНЯЙ, ЛАТВЕЛЯЙ, КОЧАНЫ, НАУСЕДЖЯЙ, РАДЗИВИЛИШКИС, ЛИНКИШАЙ, ДЕГАЙЛЯЙ, СМИЛГИАЙ, ЕУОДАВА ятлă ялсем. Виçĕ кун хушшинчи çапăçусенче пирĕн çарсем тăшмана çакăн пек çухатусем тÿстернĕ: 89 танкпа хăй тĕллĕн çÿрекен туппа персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, тĕрлĕ калибрлă 150 тупăпа 250 пулемет ытла пĕтерсе тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 6.000 вилли ытла вырт-са юлнă. Пирĕн çарсем çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксем — 16, тĕрлĕ калибрлă тупăсем — 75, пулеметсем—84. 1.350 нимĕç салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

САНДОМИР хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах ВИСЛА шывĕн сулахай енчи плацдарма аслăлатассăшăн çапăçнă, халăх пурăнакан 50 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — САМБОЖЕЦ, КЛЕЧАНУВ, КУРУВ, ЗАХОННЕ, ВЛОСТУВ, БОДУШУВ, ЛОПАТНО, КОРЫТНИЦА ятлă пысăк ялсем.

САМБОР хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем Дрогобыч облаçĕнчи район центрĕсене ХЫРОВ хулипе ДОБРОМИЛЬ хулине туртса илнĕ.

ДРОГОБЫЧ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем малалла тапăнса пынă, Дрогобыч облаçĕнчи район центрне ДУБЛЯНЫ ялне туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 40 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — ГОРОДИШЕ, ЧУКЕВ, ОЛЬШАНИК, НАГУЙОВИЦЕ, ЯСЕНИЦА СОЛЬКА ятлă пысăк ялсем тата ДУБЛЯНЫ, КУЛЬЧИЦЫ ятлă чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 7-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 159 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 46 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Нимĕç çарĕсем Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче тÿснĕ юлашки йывăр поражениссене пула, Гитлер командованийĕ Совет Союзĕпе Германи фронтне Германирен тата Европăри оккупациленĕ çĕршывсенчен çĕнĕ соединенисемпе чăссене куçарса килет.

Çакна лайăх пĕлнĕ: 1944 çулхи июлĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа августăн 3-мĕшне çитиччен Совет Союзĕпе Германи фронтне нимĕçсен çак дивизийĕсене илсе килсе çапăçăва кĕртсе янă: 73-мĕш пехотнăй дивизипе эсэсовецсен 18-мĕш танковăй дивизине — Венгрирен илсе килнĕ; «Герман Геринг» ятлă танковăй дивизие — Италирен; 1-мĕш горно-стрелковăй дивизие — Югославирен; 196-мĕш пехотнăй дивизие — Норвегирен; 541-мĕшпе 542-мĕш пехотнăй дивизисене тата 174-мĕш резервнăй дивизие, 1133-мĕшпе 1134-мĕш пехотнăй бригадăсене — Хĕвеланăç Польшăран; 3-мĕшпе 544-мĕш пехотнăй дивизисене, эсэсовецсен 14-мĕш пехотнăй дивизине, 18-мĕш артиллери дивизине, «Хĕвелтухăç Прусси» ятлă дивизие тата 761-мĕш пехотнăй бригадăна — Германирен куçарса килнĕ. Çапла ĕнтĕ, икĕ эрне çурă хушшинче кăна нимĕçсен командованийĕ Совет Союзĕпе Германи фронтне 16 дивизипе бригада куçарса килнĕ. Июнĕн 23-мĕшĕнче пуçласа янă наступленирепе Хĕрлĕ Çар тăшманăн темиçе вунă дивизине лăпчĕркесе пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсен Совет Союзĕпе Германи фронтне çĕнĕрен çитнĕ дивизийĕсене те çак шăпах кĕтсе тăрать.

АВГУСТĂН 9-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Августăн 9-мĕшĕнче пирĕн çарсем РЕЗЕКНЕ (РЕЖИЦА) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре çаплах малалла тапăнса пынă, халăх пурăнакан 30 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — ПОЛЬВАРКА, ГАРИЭ, МАУРИ, ПУРНАВИЭШИ, ЛЯУДОНА ятлă пысăк ялсем.

ДАУГАВПИЛС (ДВИНСК) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан 250 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — МЕНТЬЕ, ЗАДИНАНИ, ВАГАЛИ, КАЛНАРАЦЕНИ, УЖУБАЛЯ, НЕРЕТА, АЛОТИНИ, ЦЕКУРИ, ОЗОЛИ ятлă пысăк ялсем тата БЕРЗГАЛЕ, НЕРЕТА, РЕМПИ, ЛОНС ятлă чугун çул станцийĕсем.

ИЕЛГАВА (МИТАВА) хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшманпа çапăçса малалла куçса пынă, халăх пурăнакан 200 пункта ытла туртса илнĕ, вăл шутра — АУСАТУ, БЭНЕ, ВЕГЕРЯЙ, МАНГАЙЧАН, КРУОПЯЙ ятлă пысăк ялсем тата АБГУЛДЕ, ПЭНКУЛЕ, БЭНЕ ятлă чугун çул станцийĕсем.

МАРИАМПОЛЬ хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен контратакисене сире-сире янă, нимĕçсене çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухату кÿнĕ.

СЕДЛЕЦ хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çĕнĕрен наступлени пуçласа янă, СОКОЛУВ-ПОДЛЯСКИ хулипе ВЕНГРОВ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — БЯЛОБЖЕГИ, СЕРОЧИН, ГИЛЯРУВ, ВУЛЬКА ЕДЗИНЬСКА, ХМЕЛУВ, РУХНА, КРЫПЫ, СОБОНЬ, ЯНУБЕК, ЯВОРЕК ятлă пысăк ялсем тата КОСТКИ, СОКОЛУВ-ПОДЛЯСКИ чугун çул станцийĕсем.

САНДОМИР хулинчен хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тата унăн контратакисене сире-сире ярса, çаплах Висла шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатассăшăн çапăçнă, халăх пурăнакан темиçе пункта туртса илнĕ.

ДРОГОБЫЧ хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра пирĕн çарсем çаплах наступлени туса пынă, Дрогобыч облаçĕнчи район центрĕсене СТАРЫЙ САМБОР хулипе СКОЛЕ хулине туртса илнĕ, çавăн пекех тата тăшманпа çапăçса халăх пурăнакан ытти 80 пункта ытла йышăннă, вăл шутра — СТАРЬЯВА, ГОРНЫЙ БИЛИЧ, ДОЛЬНЫЙ БИЛИЧ, ТЕРШУВО, ЗВУР, ОПАКА, СХОДНИЦА, СТАРЫЙ КРОПИВНИК, НОВЫЙ КРОПИВНИК, РЫБНИК, БЖАЗА ятлă пысăк ялсем тата КОНЮХУВ, ЛЮБЕНЬЦЕ, СКОЛЕ чугун çул станцийĕсем.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

Августăн 8-мĕшĕнче пирĕн çарсем мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 120 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 38 самолетне персе ÿкернĕ.

☆ ☆ ☆

Резекне (Режица) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман артиллери нумай пухса тăратнă, хытă хирĕç тăрать. Пирĕн çарсем, нимĕçсен батарейисене пусарапусара лартса, çаплах малалла кайнă. Пĕр соединени чăсĕсем нимĕç пехотин батальонне вĕлерсе пĕтернĕ. 2 танк, 7 тупă тата 15 пулемет пĕтерсе тăкнă, 2 боеприпас склачĕ тытса илнĕ. Пĕр участокра тăшман хăйĕн халран кайнă чăсĕсене çĕнĕ полксемпе улăштарма тăнă. Çĕрле шăп çав вăхăтра пирĕн боецсем çав тери хăвăрт атака пуçласа янă. Нимĕçсене лайăх позицисенчен хĕссе кăларнă, çапăçу хирĕнче тăшманăн 400 виллине çити вырт-са юлнă.

* * *

Даугавпилс (Двинск) хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тăшман, инженерла чăрмавсемпе тата мина чăрмавĕсемпе усă курса, пирĕн наступлени туса пыракан çарсене хирĕç хытă тăнă. Советсен пехота чăсĕсем артиллери пулăшнипе нимĕçсене хушăри оборона позицийĕсенчен хĕссе кăларнă та 15 километр таран малалла кайнă. Пĕр соединени чăсĕсем Сусея шывĕ урлă каçнă та шоссе çулĕсен Нерета ятлă узелне туртса илнĕ. Тăшмана пысăк çухату тÿстернĕ. Пĕр пин гитлеровеца çити вĕлерсе пĕтернĕ, 22 тупă, 13 миномет тата 20 пулемет пĕтерсе тăкнă. 14 тупă, 18 миномет, 36 пулемет, 2 боеприпас склачĕ тата [illegible] трофейсем те тытса илнĕ. Нимĕçсен 81-мĕш [illegible] дивизийĕнчен тыткăна лекнĕ салтаксемпе офицерсем çапла каласа кăтартнă: юлашки çапăçусенче дивизи чăсĕсене пачах хавшатнă. Дивизири батальонсенче мĕн пурĕ те 60—80-шар çын кăна тăрса юлнă.

* * *

Иелгава (Митава) хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем çаплах малалла тапăнса пынă. Пĕр соединени чăсĕсем 20 километр малалла кайнă, нимĕçсене вăйлă çирĕплетнĕ Вегеряй ятлă тĕреклĕ пунктран хĕссе кăларнă. Пирĕн ытти чаçсем ахаль çулсен Круопяй ятлă узелне туртса илнĕ. Пирĕн çарсен наступленине чарса лартма хăтланса, тăшман темиçе контратака тунă, анчах та вĕсем пĕри те ăнăçлă пулман. Туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен пин ытла салтакĕпе офицерне пĕтерсе тăкнă. 3 танк, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 тупă, 22 хир туппи, 31 миномет, 50 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнĕ. Тыткăна нумай илнĕ.

Пирĕн авиаци тăшман çарĕсене пырапыра çапнă, нимĕçсен темиçе танкне, 60 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă, горючи складне сирпĕнтерсе янă, тăшман пехотин темиçе колоннине сапаласа янă.

* * *

Седлец хулинчен çурçĕртерехре тата çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем артиллерипе авиаци вăйлă персе хатĕрлесе панă хыççăн çĕнĕрен наступлени пуçласа янă. Оборонăра тăма лайăх позицисемпе усă курса, тăшман хытă хирĕç тăрать. Уйрăмах хаяр çапăçусем шоссе çулĕсен районĕнче пулса иртнĕ. Пĕр соединени чăсĕсем нимĕçсем хирĕç тăнине сирсе янă та шоссе çулĕсен паха узелне Сокорув-Подляски хулине туртса илнĕ. Тăшмана пысăк çухату тÿстернĕ. Пĕр участокра кăна 700 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă, хăй тĕллĕн çÿрекен 6 тупă тата 3 артиллери батарейине пĕтерсе тăкнă. Каялла чакакан нимĕçсем хĕçпăшал тата вăрçă япалисем нумай пăрахса хăварнă.

* * *

Сандомир хулинчен хĕвеланăçнерехре пĕр соединени чăсĕсем Висла шывĕн сулахай хĕрринчи плацдарма аслăлатассăшăн çапăçнă. Нимĕçсем çĕнĕ танковăй дивизи илсе пынă та хăйсен пысăк вăйĕсемпе темиçе хутчен те контратакăсем тунă. Пĕр участокра пирĕн боецсем тăшман танкĕсене хăйсенчен иртсе кайма панă та танксем хыççĕнчен пыракан бронетранспортерсемпе пехотăна татса илнĕ. Хаяр çапăçура тăшмана аркатса тăкнă. Нимĕçсен 700 салтакĕпе офицерĕ вилсе, аманса пĕтнĕ. Совет артиллерисчĕсемпе бронебойщикĕсем нимĕçсен 16 танкне çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ. 7 тягач, 100 миномет ытла, 16 тупă, 78 пулемет тата вăрçă хатĕрĕсем турттарса пыракан 100 автомашина тытса илнĕ.

* * *

Тăшман самолечĕсен ушкăнĕ Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн Финн заливĕнчи объекчĕсене тапăнма хăтланнă. Пирĕн летчиксемпе зенитчиксем тăшмана çав объектсем патне пыма паман. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 6 самолетне персе ÿкернĕ.

Ăмăртура мала тухнă промысла артелĕ

Шупашкарти «Пекарь» артель коллективĕ «Металлист» артель коллективĕпе ăмăртса ĕçлет. Июль уйăхĕнче вăл производство планне 207 процент тултарса, ăмăртура малти вырăна тухрĕ.

Артельте уйрăмăнах тутлă шывсем тăвакан цех коллективĕ лайăх ĕçлет. Вăл уйăхри плана 214 процент тултарнă. Çĕвĕ çĕлекен тата çăкăр пĕçерекен цехсем те кая юлман.

Çак çитĕнĕве артельти рабочисем стахановла ĕçленипе тунă. Çĕвĕ çĕлекен цехри Колосова юлташ, Скворцова юлташпа ăмăртса ĕçлесе, уйăхри плана 265 процент тултарнă. Скворцова юлташ та унтан нумай кая юлман.

М. ВАСИЛЬЕВ.

Елчĕкри крахмал заводĕнче

Елчĕкри крахмал завочĕ иртнĕ çулта та начар мар ĕçлерĕ. Продукци туса кăлармалли çулталăкри плана 112 процент пурнăçланă. Кăçал завод хăйĕн ĕçне татах та лайăхлатрĕ. Завод коллективĕ продукци кăларассине чылаях ÿстерчĕ. Заводра кулленхи нормăна тултарман рабочисем пачах çук. Завод пĕрремĕш çур çулта планран ирттерсе 35.568 литр брага туса кăларнă, 4 тонна çĕрулми типĕтсе хатĕрленĕ. Кусемсĕр пуçне 17,3 тонна патока тунă, 12 тонна ытларах кĕсел пĕçернĕ.

Брага тунă çĕрте ĕçлекен бригада (бригадирĕ М. Тихонова юлташ) кулленхи нормăна яланах 150 процентран кая мар, патока тунă çĕрте ĕçлекен бригада (бригадирĕ Агеева юлташ) 200 процент таран тултарса ĕçлеççĕ. М. Тихоновăпа Е. Агеевăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă.

Кăçал заводра çĕнĕ цех — варени пĕçермелли цех пулать. Ун валли завод пĕр гектар сахăр кăшманĕ акса хăварнă.

Заводра подсобнăй хуçалăх пур. Унта 11 гектар сĕлĕ, 3 гектар пĕри, 8,5 гектар вика, 2 гектар çĕрулми, пĕр гектар чĕкăнтĕр акнă тата купăста, помидор лартнă. Пахча-çимĕçсем тăварлама 2 тонна вырнаçмалăх каткасем хатĕрленĕ тата вĕсене усрама подвал тунă.

Халĕ завод çĕнĕ сезона хатĕрленет. Локомотивсăр пуçне, машинăсене йăлтах юсанă. Стенасене шалтан та тултан та шуратнă. Завод картишне лайăх тасатнă. Завод валли кăçал 1200 кубометр вутă хатĕрлемелле, 1.084 кубометр хатĕрленĕ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ ВĂРÇĂ ПАТТĂРĔСЕМ

Ÿкерчĕк çинче: пирĕн земляк капитан Г. В. Васильев. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿре хăюлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн Правительство ăна икĕ хутчен Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе наградăланă. Фронта кайиччен Васильев юлташ республикăри Осоавиахим организацийĕсенче ĕçленĕ.

Н. ДАНИЛОВ фотоÿкерчĕкĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хусан чугун çулĕ çинчи уйрăмах палăрнă работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри Сталинла Кунне палăртас майпа, производство заданийĕсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пынăшăн Хусан чугун çулĕ çинчи уйрăмах палăрнă работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Анна Александровна Александровăна — çул строительствин 1-мĕш участокĕнчи платнике.
2. Василий Александрович Александрова — Вăрмар станцин весовщикне.
3. Константин Евгеньевич Александровскине — Канаш станци деповĕн дежурнăйне.
4. Иван Васильевич Альбатроса — Энĕшпуç разъезчĕн начальникне.
5. Федора Андреевна Андреевăна—çул службин 5-мĕш дистанцийĕнчи 4-мĕш околотокри çулсене пăхса тăракана.
6. Екатерина Григорьевна Анисимовăна —çулăн 4-мĕш дистанцийĕнчи 5-мĕш околотокăн работницине.
7. Иван Андреевич Анисимова — Шупашкар станци вокзалĕн дежурнăйне.
8. Аристарх Романович Архилова — çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи 7-мĕш околотокăн бригадирне.
9. Анна Архиповна Архиповăна — Канаш станцийĕнчи топливо склачĕн работницине.
10. Павел Васильевич Баданова — Канаш станци деповĕн машинистне.
11. Миндин Замалдинович Валеева — Канаш станцинчи топливо склачĕн рабочине.
12. Анна Васильевна Васильевăна — Канашри кондукторсен резервĕнчи старши кондуктора.
13. Василиса Васильевна Васильевăна— çулăн 5-мĕш дистанцийĕнчи работницăна.
14. Филипп Васильевич Васильева — Канаш станцинчи пожарниксен командин пăхса тăмалли пунктăн кровельщикне.
15. Вениамин Степанович Власова — Канаш станцинчи пожарниксен командин начальникне.
16. Иван Иванович Волкова — çул строительствин 1-мĕш номерлĕ участокĕн материал базин начальникне.
17. Валентина Павловна Воронцовăна— Канаш станци деповĕнчи машинистăн помощницине.
18. Акулина Васильевна Гайдученкăна— Канаш станцинчи 6-мĕш номерлĕ столовăйăн старши поварне.
19. Иван Григорьевич Григорьева — Канаш станци деповĕн котельщикне.
20. Яков Григорьевич Григорьева — Шупашкар станцинчи тавар конторин тавар турттараканне.
21. Сергей Николаевич Грошева — çулăн 5-мĕш дистанцийĕнчи мастерской начальникне.
22. Евдокия Алексеевна Громиловăна — Улатăр станцин телеграфисткине.
23. Елизавета Алексеевна Добрынкинăна — Алтышево станцин старши стрелочницине.
24. Константин Алексеевич Долгова — çул строительствин 1-мĕш номерлĕ участокĕн начальникне.
25. Григорий Михайлович Доманина — Вăрнар станцин старши стрелочникне.
26. Андрей Матвеевич Дроздова — движени службин 3-мĕш отделени начальникĕн заместительне.
27. Порфирий Егорович Егорова — 265-мĕш километрти разъездăн начальникне.
28. Алексей Филиппович Елагина.
29. Владимир Ермолаевич Ермолаева — çулăн 14-мĕш дистанцийĕнчи çулсене пăхса тăракана.
30. Алексей Васильевич Ермишина — çулăн 4-мĕш дистанцийĕнчи 5-мĕш околотокри çулсене пăхса тăракана.
31. Александр Петрович Ермохина — Канаш станци деповĕн бригадирне.
32. Кузьма Федорович Журкина — Канаш станцинчи вагонсене пăхса тăракана.
33. Ольга Дмитриевна Зайцевăна — Канаш станцинчи таварсем тиекене.
34. Иван Иванович Иванова — Канаш станцин маневровăй диспетчерне.

(Малалли çитес номерте пулать).

Тырпул фронтпа çĕршыва боеприпас пекех кирлĕ

Пĕр чарăнмасăр авăн çапар, государствăна тырпул хăвăртрах леçсе парар, çапла вара наступлени туса пыракан Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăнрах пулăшар!

Укерчĕк çинче: Муркаш районĕнчи Свердлов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ **Т. В. Налимов.** Лайăх ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă. Хĕрлĕ Çар валли самолетсем тума вăл 10.000 тенкĕ укçа панă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Нормăна тултарман колхозниксем çук

КУСЛАВККА. (Телефонпа). Районри колхозсенче тырпул пухса кĕртес ĕç хĕрӳллĕ пырать. Вăрнарсем чĕнсе каланине колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче сӳтсе-явнă хыççăн ĕç тата ытларах хастарланчĕ. Çав чĕнĕве сӳтсе-явнă чухне Карачри колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем çине татăклă обязательствăсем илчĕç. Вĕсем тырпула августăн 15-мĕшĕ тĕлне пуçтарса кĕртме, государствăна тырă памалли плана срокчен тултарма, кĕрхи акана 7 кунта вĕçлеме сăмах панă. Çавăн пекех «Память Чкалова» колхоз колхозникĕсем те тырпул пуçтарса кĕртес ĕçе срокчен пурнăçа кĕртме пулнă.

Вĕсем халĕ хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Карачри колхозниксемпе колхозницăсем тырă вырнă çĕрте ĕç нормине пурте ирттерсе тултараççĕ. Сăмахран, П. Солина, В. Фомина, К. Сидорова юлташсем икĕ норма таран тултарса ĕçлеççĕ. Çавăн пек колхозниксене татах та нумай илсе кăтартма пулать. Колхоз тырпулсене тăкаксăр тата ăнăçлăн пухса пырать. Государствăна 3 тонна тырă ăсатнă та ĕнтĕ.

И. ШАРКОВ.

Укерчĕк çинче: Муркаш районĕнчи «Красное Сормово» колхозри 2-мĕш бригадăн конюхĕ **А. И. Иванов.** Вăл 63 çулта, конюхра 8 çул ĕçлет ĕнтĕ. Хĕрлĕ Çар валли нумай лаша çитĕнтерсе панă.

Н. ДАНИЛОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Государствăна ыраш памалли плана тултарнă

КАЛИНИНО. (Телефонпа). Мачамăшри «Первомайский» колхоз колхозникĕсем вăрнарсем чĕнсе каланине ĕçпе ответлеççĕ. Вĕсем тырпулсене вăхăтра, тăкаксăр пуçтарса кĕртеççĕ, çакăнпа пĕрлех авăн çапса государствăна тырă парас ĕçе те лайăх организациленĕ. Колхоз паянхи куна государствăна ыраш памалли плана пĕтĕмĕшпех тултарнă.

В. ЗАЙЦЕВ.

39 колхоз ыраш вырса пĕтернĕ

Елчĕк районĕнчи кашни колхозрах СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн ăнлантарса пани тата çав постановлени пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыни ĕç тухăçлăхне нумай ӳстерчĕ. Августăн 9-мĕшĕ тĕлне районри 39 колхоз ыраш вырса пĕтернĕ. Пур колхозсенче те уйрăм сдельщинăпа ĕçленĕ, машинăсемпе туллин усă курнă.

«Сатурн» колхоз халиччен юлса пыраканнисен шутĕнче пулнă. Анчах уйрăм сдельщинăпа ĕçленине пула, кунта çурлапа выракансем нумайĕшĕ кулленхи нормăна 200—250 процент таран тултарса пыраççĕ. Колхозница Гордеева кулленех ĕç нормине 300 процент тултарать.

Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра машинист П. Алексеев, кашни кунах жнейкăпа 6—7 гектар вырса, ĕç нормине 150—170 процент тултарать. Çак колхозри 5-мĕш бригадăн 1-мĕш звенинчи Матрена Леонтьева машина хыççăн 400 кĕлте вырăнне 1300 кĕлте çыхать. Çакăн пек тĕслĕхсем районри колхозсенче нумай тĕл пулма пулать.

Районĕпе паянхи кун тĕлне 11.153 гектар тырă вырнă, вăл шутран 373 гектар çуртыррисем вырса пухнă. Юлашки кунсенче тăтăшах çумăр пулса тăни вырнă тырпула капана хывассине нумай чăрмантарчĕ. Çапах та августăн 9—10-мĕш кунĕсенче 544 гектар çинчи кĕлтесене капана хывнă тата 359 гектар çинчи тырпула çапнă. Тырра çапнă хыççăнах типĕтеççĕ те «Заготзерно» пунктĕсене ăсатаççĕ. Аслă Елчĕкри Ленин ячĕпе тăракан колхоз çак юлашки кунсенче 220 центнер тырă ăсатнă, «Хунав» колхоз ĕнерхи кун 15 центнер тырă леçнĕ.

Тырă вырса пухнипе пĕрлех районри нумай колхозсем кĕртыррисем акма тухрĕç. Паянхи кун тĕлне 200 гектар ытла акнă. «Смычка» колхоз 30 гектар, «Октябрь» колхоз 15 гектар, Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз 50 гектар ыраш акнă та ĕнтĕ. Районри пур колхозсем те ыраш акас ĕçе паян тытăнаççĕ.

(Хамăр корр.).

Колхозниксен хастарлă ĕçĕ çитĕнӳсем кӳрет

ЕТЕРНЕ, августăн 10-мĕшĕ. (Телефонпа). Тури Мучарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Ильин юлташ) кăçал тырпул пуçтарса кĕртме вăхăтра тата тĕплĕн хатĕрленнĕ. Колхозăн икĕ жнейка, пĕр сложнăй молотилка пур. Вĕсене пĕтĕмпех юсанă. Çавăн пекех кĕреплеллĕ çавасемпе çурласем те çителĕклĕ хатĕрленĕ. Çавăнпа та колхоз халĕ, иртнĕ çулсенче кая юлса пынăскер, малтисен ретне тухрĕ.

Колхозра тырă вырас ĕçе пĕтĕмĕшпех уйрăм сдельщинăпа организациленĕ. Колхозăн ĕç планне кашни колхознике ăнлантарса панă. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем ăста тата мĕн тумаллине тĕплĕн пĕлеççĕ. Нумайĕшĕсем хăйсен ĕçне чыслăн пурнăçлаççĕ. Н. Степанова, Захарова, А. Васильева колхозницăсем ĕç нормине 250 процент таран тултарса пыраççĕ. 1-мĕш бригадăра ĕçлекен 10 çулхи Н. Петрова кашни кун 85 кĕлте таран вырать. 3-мĕш бригадăри 68 çулхи Е. Кириллова юлташ нормăна 220 процент тултарать.

— Манăн виçĕ ывăл фронтра,—тет Кириллова юлташ. — Эпĕ вĕсене пӗччен пурăнатăп. Хамăн ывăлсене эпĕ колхоз хирĕнче стахановла ĕçлесе пулăшатăп.

Государствăна ялхуçалăх продукчĕсем турттарса панă çĕрте ĕçлеме колхоз транспорт бригади организациленĕ. Вăл августăн 2-мĕшĕ тĕлне 20 центнер тырă леçсе панă.

Колхозра пурĕ 4 бригада. Кашни бригадăра 3 звено. Вĕсем кашниех пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Бригадăсемпе звеносен тата уйрăм колхозниксен ĕçĕсене кăтартма кăтарту хăми, малта пыракан бригадăна пама Хĕрлĕ ялав тунă. Çав ялава халĕ 1-мĕш бригада тытса тăрать.

Колхоз хăйĕн колхозникĕсем валли тухăçлăн ĕçлеме условисем туса парассишĕн тăрăшать. Столовой уçнă, унта виçĕ хутчен апат çитереççĕ.

Колхозра вăрнарсем чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн тырпул пуçтарса кĕртес ĕçе татах та хăвăртлатнă. Колхозниксемпе колхозницăсем куллен хастарлăн ĕçлени çитĕнӳсем тума май парать.

Я. ТРОФИМОВ.

Кашни кĕсререн пĕрер тиха

МУРКАШ. Турханти «Çĕнĕ Хунав» колхоз членĕ Егор Романов 12 çул ĕнтĕ старши конюх пулса ĕçлет.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа вара вăл Хĕрлĕ Çара 39 лаша пăхса ӳстерсе панă. 1943 çулта Романов юлташ 16 кĕсререн 15 тиха тата 1944 çулта 8 кĕсререн 8 тиха илнĕ. Тихасем аван çитĕнеççĕ. Кăçал кĕсресене пурне те вăхăтра чуптарса хăварнă. Кунта витесене таса тытаççĕ.

Конюхсен вăйĕпех çамрăк тихасем валли 25 центнер витаминлă апат хатĕрленĕ. Чирленĕ лашасене пулăшу пама кунта уйрăм аптечка пур.

Лайăх ĕçленĕшĕн Романов юлташа правлени пурĕ 7 хут преми панă, кăçал ăна Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

В. НИКИФОРОВ.

„Культура“ колхоз мĕншĕн юлса пырать?

Комсомольски районри «Культура» колхозăн кăçал 224 гектар ыраш, 316 гектар çуртыррисем вырса пухмалла. 8 кун хушшинче колхоз пурĕ те 96 гектар кăна вырнă. Колхозăн 4 жнейка пур, çурлапа вырма пултаракансем 150 çын шутланаççĕ. Кашни кунах кунта, вăтам нормăпа ĕçлесен те, 31 гектар вырмалла, анчах 10—12 гектар кăна выраççĕ.

Колхоз тырпул пухса кĕртме çителĕксĕр хатĕрленнĕ, тырă вырас ĕçе кирлĕ пек организацилемен. Колхоз председателĕ А. Козлов юлташ, колхозри пур машинăсемпе те туллин усă курас, ĕç вăйне пĕтĕмпех тырă вырма мобилизацилес вырăнне, МТС комбайнĕсем çине ытларах шанса ларнă.

4 жнейкăран 2-шĕпе пачах ĕçлемеççĕ, вĕсене юсаса пĕтермен. Ĕçлекен икĕ жнейка та кулленхи нормăна тултарса пыраймаççĕ. 4-мĕш бригадăри машинист П. Груздев кунне 3,5 гектар вырас вырăнне 1—1,5 гектар кăна вырать.

— Лашасем вăйсăр, ырашĕ ытла та вăйлă, — тесе ӳпкелешет Козлов юлташ. Машина хыççăн кĕлте çыхакансем те хăйсен ĕç нормине тултараймаççĕ. Акă, Александра Михайлова юлташах илер. Вăл вăйпитти çамрăк çын. Анчах та 400 кĕлте çыхас вырăнне, пурĕ те 250—300 кĕлте çеç çыхать. А. Трофимова юлташ та 300—310 кĕлте кăна çыхать.

Тырра çурлапа выракансем те нумайĕшĕсем кулленхи нормăна тултараймаççĕ. Тырă вырма ирхине 7—8 сехетре тин тухаççĕ, 12 сехетре вара кăнтăрлахи апата яла тăвăрнаççĕ. Унтан 4—5 сехетре ĕçрен кĕреççĕ.

Колхозра пĕрлешӳллĕ столовăй туман, ясли организацилемен, ĕçлеме пултаракансене пурне те ĕçе явăçтарман. Хĕрӳ ĕç пынă вăхăтрах Анкудинова, Северова, Васильева колхозницăсем хăйсем валли утă çулса çӳреççĕ.

Тырă вырнă çĕрте тăкаксемпе кĕрешесси çине пачах çавăрăнса пăхмаççĕ. Н. Афанасьев ертсе пыракан бригадăра ĕçлекенсем вырнă çĕрте кашни тăваткăл метртах 20—25 пучах тăкăнса юлать. Бригадирсем выракансенчен ĕçе йышăнмаççĕ, колхоз председателĕ Козлов юлташ вара ыраш вырма тытăннăранпа та колхоз хирне тухса курман. Уйрăм сдельщина пирки кунта каласмалли те çук. Колхозниксем хăйсем тĕллĕн ĕçлеççĕ. Колхозăн лашапа пухмалли икĕ кĕрепле пур, вĕсем юсавлă. Тăкăнса юлнă пучахсене пухас ĕçре вĕсемпе усă курма шутламаççĕ.

Колхозăн ыраш акма тухмалла. Анчах паянхи кун тĕлне те çĕртме туса пĕтермен. 50 гектар çинче арăмути шавласа ларать. Çĕртме пуссине çумкурăкĕ пусса илнĕ. Уя тăкмалли тислĕке колхоз правленийĕ умĕнчи çырмана тăкаççĕ.

СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ 1944 çулта тырпул пухса кĕртесси çинчен йышăннă постановлени Козлов юлташ хăй уççăнах пăсса пырать. Çак куна çитсе те государствăна обязательство тăрăх тырă паман. Çав вăхăтрах колхозниксене 3-шер килограмм валеçнĕ.

Тырпул Козлов пек çаврăнăçусăр руководительсене кĕтсе тăмасть. Тырпулсем пиçсе çитнĕ, вĕсене пухса кĕртме мĕнпур ĕçе юрăхлă çынсене мобилизацилемелле, машинăсемпе туллин усă курмалла.

В. ЯСТРЕБОВ.

«Чăваш Коммунин» ятарласа кайнă корреспонденчĕ.

Ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илсе пымалла

Ку таринччен пирĕн колхозра ĕçкунĕсене ведомость çине колхоз учетчикĕ çырса пынă. Ун хыççăн тин вара колхозниксен ĕç кĕнекисем çине куçарнă. Кашни бригадăна, звенона уйрăм участоксем тата уйрăм культурăсем çирĕплетсе панă пулин те, колхозниксен ĕçкунĕсене звено тăрăх, уйрăм культура тăрăх шута илмен. Çакă вăл колхозри звеносем хăйсен участокĕсем çинче мĕнле культура мĕн чухлĕ туса илнине палăртас ĕçе, колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлес закона пурнăçласа пыма чăрмантарать.

Çак çитменлĕхе пĕтерес тесе, эпир колхозра учет ĕçне лайăхлатмалли мерăсем йышăнтăмăр. Чи малтанах колхозниксен ĕçкунĕсене, вĕсем ăçта тата мĕн чухлĕ ĕçленине кура, кашни культура тăрăх, звено тăрăх шута илесси çинчен бригадирсене, звеньевойсене ăнлантарса патăмăр, кун пирки правлени ларăвĕнче уйрăмăн сӳтсе-яврăмăр. Уйхирте ĕçленĕшĕн колхозниксен ĕçкунĕсене бригадирсем лартса пымалла турăмăр. Малта пыракан колхозниксемпе звеносене ĕçшĕн хушса тӳлес ĕçе тĕрĕс пурнăçа кĕртес тесе, бригадирсене, звенона çирĕплетсе панă культурăсем тăрăх, ĕçкунĕсем лартса пама вĕрентрĕмĕр. «Ĕçкунĕсене шута илмелли ведомоçа» мĕнле çырса пымалли çинчен каласа патăмăр. Халĕ ĕнтĕ бригадир, ĕçленине çырнă чухне, çав ĕçе мĕнле культура çинче тунине палăртса çырать. Ĕçкунĕсене шута илмелли ведомоçа тĕрĕс тума вĕсене колхоз учетчикĕ пулăшать.

Колхозниксем хăйсем мĕнле участок, мĕнле тырă çинче ĕçлесе мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине пĕлесшĕн. Çакна тивĕçтерес тесе, бригадирсене çакăн пек йĕрке туса панă: колхозникĕн ĕç кĕнеки çине ĕçкунĕсем лартнă чухне, колхозник çав ĕçкунĕсене мĕнле культура патĕнче ĕçлесе илнине паллă тумалла.

Çапла ĕнтĕ кашни колхозник хăй мĕнле культура патĕнче ĕçлесе, куллен мĕн чухлĕ ĕçкунĕ тунине пĕлет. Колхозри бригадирсем ĕçкунĕсене кашни кун çырса пыма тăрăшаççĕ, кашни кунхи ĕçе вăхăтра шута илеççĕ.

Хĕрӳллĕ вăхăтра бригадирсем нумай ĕçпе çыхăнаççĕ, çавăн чухне ĕçе шута илесси пăтрашса каймa пултарать. Ун пек ан пултăр тесе, шутĕç работникĕсем бригадирсене практикăллă пулăшу параççĕ.

Учет ĕçне эпир культурăсем тăрăх туса пыратпăр. Пирĕн колхозăн счетовочĕпе учетчик продукцие звеносем тăрăх шута илеççĕ. Ку тĕлĕшпе кирлĕ бланксемпе журналсене çителĕклĕ хатĕрлесе хунă. Халĕ эпир кăçалхи тырпулсене — сĕлĕ, тулă, ыраш, урпа т. ыт. те кашни звено мĕн чухлĕ туса илнине çапнă чухне уйрăмăн виçме хатĕрлентĕмĕр. Пĕр-пĕрин участокĕсенчи тырра çапиччен тата çапса виçсе пăхиччен пĕрлештерместпĕр.

Ана эпир çапла тăватпăр: малтан — пĕр звено пуçтарса кĕртнĕ тырра, унтан ыттисенне йĕркипе çапатпăр. Молотилкăран тухакан тырра пĕрлештерместпĕр. Тырра михĕсем çине тултаратпăр та амбара леçиччен итем çинчех виçетпĕр. Весовщик виçнĕ çĕрте бригадир сăнаса тăрать. Тырра амбара ăсатмалли накладной çинче бригада тата звено номерне кăтартса çыраççĕ. Тепĕр кунне вара çав накладнойсене правление, счетовод патне илсе пыраççĕ те, счетовод вара бригадăн тата звенон лицевой счечĕ çине мĕнле тырă, миçе центнер пулнине кăтартса çырса хурать.

Халĕ эпир колхозра кашни звенон ĕçне уйрăм шута илсе пырассине организацилерĕмĕр. Çĕрулми кăларнă чухне те ĕçе звеносем тăрăх туса пыратпăр. Кашни звенори çын кунне миçе пăт çĕрулми кăларнине уйрăмăн шута илетпĕр. Çавăн пек туни колхозниксен ĕçне тĕрĕс шута илме тата ĕçшĕн хушса тӳлессине тĕрĕс пурнăçа кĕртме пулăшать. Ĕçе тĕрĕс шута илни колхозниксене те хавхалантарать.

М. СТЕПАНОВ.

Красноармейски районри «Малалла» колхоз председателĕ.

Американецсен бомбардировочнăй авиацийĕн соединенийĕсем Тщебиния хулине тапăнни

США-н Хĕвелтухăç Европăри стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен командованийĕн штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, августăн 7-мĕшĕнче американецсен бомбардировочнăй авиацийĕн СССР-ти авиабазăсемпе усă куракан соединенийĕсем Краков районĕнче ларакан Тщебиния хулинчи синтетически нефть заводне тапăннă. Летчиксем пĕлтернĕ тăрăх, тапăну районĕнче вăйлă взрывсем пулнă, пушарсем тухнă. Сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 4 самолетне персе ӳкернĕ. Америка самолечĕсем пурте хăйсен базисене таврăннă. (ТАСС).

Çурçĕр Францири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: августăн 7-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле тăшман пирĕн хĕвеланăç енчи секторта, Мортенпа Сурдеваль хушшинчи участокра, вăйлă наступлени пуçласа янă. Мортен виçĕ хутчен аларан алла куçнă. хальхи вăхăтра вăл союзниксен çарĕсен аллинче тăрать. Тăшман Шерано-ле-Руссель районĕнче пĕр 3 миля шалалла кĕрсе кайнă, унта халь танксем çапăçаççĕ. Тăшман тата Сен-Бартелеми районĕнче те союзниксен çарĕсем тăракан вырăна савăлланса кĕрсе кайнă.

Истребитель-бомбардировщиксем тата ракета пăрахакан самолетсем, темиçе хутчен тапăнса, Мортен районĕнче тăшманăн 100 танкне ытла тата 90 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Нумай танксемпе грузовиксене сиенленĕ.

Бретань çурутравĕнче союзниксен çарĕсем Шатонеф хулине ирĕке кăларнă. Çапăçусем Сен-Мало хули патĕнче пыраççĕ. Çав хулана халь йăлтах татса илнĕ. Союзниксен çарĕсем Сен-Брие хулине туртса илнĕ те малалла наступлени туса пыраççĕ. Брестпа Лориан районĕнче нимĕнле улшăну та пулман. Союзниксен çарĕсем Орэ патне çитнĕ. Шатобриан хулине ирĕке кăларнă. Пĕтĕм çурутравĕпех вырăнти çапăçусем пыраççĕ.

Нормандире союзниксен çарĕсем Вир ятлă пункта йышăннă. Августăн 7-мĕшĕнче, Орн шывĕ урлă каçса кайса, вĕсем Гренбоск районĕнче плацдарм туса хунă. Çав участокра тата унтан хĕвеланăçнерехре тăшманăн контратакисене сирсе янă. Мон-Пенкон сăрчĕ районĕнче тытса илнĕ территорие тăшмантан тасатса пĕтернĕле пĕрех ĕнтĕ. Союзниксен çарĕсем Кан хулинчен кăнтăртарахра атакăлаççĕ.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çар объекчĕсене хаяррăн пыра-пыра тапăннă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ паян пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă:

«Бретаньре союзниксен çарĕсем Сен-Мало, Брест тата Лориан порчĕсене йăлтах хупăрласа илеççĕ. Союзниксен çарĕсен отрячĕсем тăшманпа Лорианран тата Брестран 4—5 мильăра çапăçаççĕ, Сен-Мало хулипе юнашар ялсене кĕрсе кайнă. Лорианпа Сен-Мало хулисенче пушарсем ялкăшаççĕ: кунта нимĕçсем çак портсенчи складсенче выртакан запассене пĕтереççĕ. Мортен хули таврашĕнчи çапăçусем пĕрре союзниксем майлă, тепре нимĕçсем майлă пулса пыраççĕ. Мортен хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре ларакан Гатемо патĕнче нимĕçсен танкĕсемпе пехотин контратакисем антăхса ларнă. Пилĕк çул узелĕ пулса тăракан Гатемо хулине ирĕке кăларнă. Нимĕçсене пирĕн авиаципе артиллери йывăр çухату кӳнĕ, тăшман пирĕн позицисем ăшнелле пĕр мильăна çити кĕрсе кайнă. Ку районра халĕ фронт линийĕ Гатемо хулипе Вир хули хушшинчи çул тăрăх пырать.

Вир хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри тата кăнтăртарахри районсенче тăшман хытă хирĕç тăрать. Кан хулинчен кăнтăралла союзниксем наступлени туса пыраççĕ. Союзниксен çарĕсен тылĕнче йышлăн тăрса юлнă тăшман гарнизонĕсене кун каçиччен пурне те пĕтерсе тăкнă. Тăшман танксем пулăшнипе питех те хытă хирĕç тăрать пулин те, пирĕн наступлени малаллах пырать.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн вăрçă объекчĕсемпе гарнизонĕсене пыра-пыра тапăннă».

Италири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Италире союзниксен армийĕсен пĕтĕм фрончĕ тăршшĕпех юлашки кунсенче патрульсем çеç активлăн кĕрешнĕ тата артиллери персе тăнă.

Ĕнер союзниксен авиацийĕ Югославири нефтьрен тĕрлĕ япаласем тăвакан заводсене тата аэродромсене, тăшманăн Çурçĕр Италири, Югославири тата Францири çулйĕрĕсемпе ытти вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă. Çавăн чухне тăшманăн 29 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

ЛОНДОН, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: Итали фронтĕнче активлă çапăçусем Флоренци патĕнчен Ареццоран çурçĕртерехри сектора куçнă. Унта союзниксен çарĕсем Арно шывĕн тури районĕн хĕвеланăç пайĕнче Биббьена хули çывăхĕнчи Грилло ятлă çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Çак çӳллĕ вырăна каялла туртса илме хăтланса, нимĕçсем кун каçиччен пилĕк хут контратака тунă. Союзниксен артиллерийĕ нимĕçсен çав пилĕк контратакине те сирсе янă. Унтан нимĕçсем Арно шывĕн тури юхăмĕн хĕвелтухăç районĕнчи тӳпесем çинче союзниксен çарĕсем йышăнса тăракан позицисене хирĕç контратакăсем пуçласа янă. Союзниксен çарĕсем ку контратакăсене те сирсе янă. Понтассиеве хулинчен хĕвеланăçнерехре, Арно шывĕнчен кăнтăртарахра, союзниксен çарĕсем пĕр çӳллĕ вырăна туртса илнĕ. Ку çӳллĕ вырăна каялла туртса илме хăтланса, тăшман контратака пуçласа янă. Союзниксем ку контратакăна та сирсе янă. Фронтăн ытти участокĕсенче патрульсем çапăçнă.

Союзниксен авиацийĕ тăшманăн çапăçусем пыракан районри, Çурçĕр Италири, Кăнтăр Францири, çавăн пекех тата Югославири çулйĕрĕсемпе вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн верховнăй штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, Сербире Лобанерен кăнтăртарахра хаяр çапăçусем пыраççĕ. Сербипе Черногорире тăшманăн пысăк группировкисене аркатса тăкнă.

Черногорире Богетич ятлă пункта йышăннă. Халăх çарĕн чаçĕсем тăшмана Данилов Град тата Подгорица еннелле хăваласа пыраççĕ. Тăшманăн Никшичри гарнизонне хупăрласа илнĕ.

Далмацире, Дрниш-Книн секторĕнче, пысăк вăйсемпе наступлени туса пырса, тăшман Çурçĕр Далмацири çулйĕрсене ирĕке кăларма тăрăшать. Икĕ енĕ те питĕ нумай хутчен атакăсем тăваççĕ, часчасах алă вĕççĕн çапăça-çапăça илеççĕ. Цетина улăхĕ секторĕнче кун каçиччен тăшманăн 500 салтакне ытла пĕтерсе тăкнă.

Словенире Югослави чаçĕсем тăшманăн вăйлă çирĕплетнĕ Пишеце ятлă пунктне тытса илнĕ.

НИМĔÇ ОККУПАНЧĔСЕН ЮГОСЛАВИРИ ÇУХАТĂВĔСЕМ

ЖЕНЕВА, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн верховнăй штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем хăйсен юлашки 7-мĕш наступленийĕнче Югославире çакăн пек çухатусем тӳснĕ: 20.500 çын вилнĕ, 16.000 çын аманнă, 6.500 салтакпа офицер тыткăна лекнĕ. Югослави чаçĕсем çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 96 тупă, 19 танк, 3 самолет, 80 грузовик, 16.000 винтовка, боеприпас тиенĕ 60 вагон, 800 лаша. Нимĕççенне пĕтерсе тăкнă: 175 тупă, 108 танк, 37 самолет, 1.400 грузовик, 94 паровоз, 700 вагон тата юханшыв тăрăх çӳремелли 96 судно.

Югославие ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен халăх çарĕн 2-мĕш корпусĕн командованийĕ Югослави вăйĕсен пысăк çĕнтерĕвĕ çинчен пĕлтерет. Çак çĕнтерӳ нимĕçсен Черногорири наступленине путлантарса лартнă. Нимĕçсен Балканри çарĕсен командующийĕн фон Вейхс генералăн приказне тытса илнĕ. Çав приказра каланă тăрăх, нимĕçсем Черногорире наступлени пуçласа ярса, Лим шывĕн улăхне туртса илесшĕн пулнă. Югославсен 2-мĕш корпусĕ нимĕççен çак планне пĕтĕмĕшпех пăчлантарса лартнă. Тăшмана пуçĕпех çапса çĕмĕрнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшман салтакĕсемпе офицерĕсен 1.000 виллине ытла пухнă. 200 нимĕçе ытла тыткăна илнĕ.

РСФСР Наркомземĕн Сĕнтĕрвăрринчи çĕрйĕркелӳпе Мелиораци техникумĕ çĕрйĕркелӳ отделенийĕпе гидротехника отделенийĕн 1-мĕш курсĕсене вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Техникумăн пысăк квалификациллĕ педагогика кадрĕсем, лайăх оборудованиллĕ вĕренӳ кабинечĕсем, пысăк библиотека, лайăх апат-çимĕç бази, столовăй, общежити пур.

Гидротехника отделенийĕ гидротехниксене вĕрентсе кăларать, çĕрйĕркелӳ отделенийĕ çĕрйĕркелекен техниксене вĕрентсе кăларать.

Техникумра 3 çул вĕренмелле.

Техникума 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, туллимар вăтам шкултан вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Вĕренме кĕрес текенсен сентябрĕн 20-мĕшĕччен заявлени памалла. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) ăçта миçе çул вĕренни çинчен, 2) ăçта хăçан çурални çинчен, 3) сывлăх çинчен, 4) çирĕплетнĕ автобиографи.

Сентябрĕн 21-мĕшĕпе 25-мĕшĕ хушшинче çак предмедсемпе испытани пулать: математикăпа, вырăс чĕлхипе, СССР Конституцийĕпе.

1942-мĕш, 1943-мĕш, 1944-мĕш вĕренӳ çулĕсенче туллимар вăтам шкултан «отлично» паллăсемпе вĕренсе тухнисене техникума испытанисĕрех илеççĕ. Вăтам шкулăн 8-мĕш, 9-мĕш, 10-мĕш класĕсенчен вĕренсе тухнисене те техникумăн 1-мĕш курсне испытанисĕрех илеççĕ. Вĕренме кĕнисене пурне те общежитие вырнаçтараççĕ, выртса тăмалли вырăн параççĕ, стипенди параççĕ.

Техникумра октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

СССР Юстици Халăх Комиссариачĕн Хусанти институчĕ 1-мĕш курса вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Институт судпа прокуратура органĕсенче, арбитражра, нотариатра тата СССР Юстици Халăх Комиссариачĕн аппаратĕнче ĕçлеме квалификациллĕ юристсем вĕрентсе хатĕрлет.

Институтра 4 çул вĕренмелле.

Института 17 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, вăтам шкултан вĕренсе тухнисене илеççĕ. Вăтам шкултан 1943—44 çулта вĕренсе тухнисене испытанисĕрех илеççĕ. Ыттисен пурин те çак предметсемпе испытани тытмалла: СССР историйĕпе, СССР географийĕпе, вырăс чĕлхипе тата вырăс литературипе.

Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) автобиографи, 2) шкултан вĕренсе тухнине кăтартакан аттестат (аттестатне хăйне, копине мар), 3) виçĕ фотокарточка, 4) çар службин тĕлĕшпе мĕнле шутланса тăнине кăтартакан справка.

Студентсене пĕтĕмĕшле йĕркепе стипенди параççĕ. Рабочисен нормипе тăрантараççĕ. Институт çумĕнче хупă йышши столовăй пур, ытти хуласенчен килнисем валли общежити пур.

Вĕренме кĕмелли испытанисем августăн 18-мĕшĕнче пуçланаççĕ.

Октябрĕн 1-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ.

9-мĕш номерлĕ ФЗО шкулне ялан ĕçлеме çакăн пек работниксем кирлĕ: комендантсем, уборщицăсем, старши бухгалтер, счетовод-кассир, кладовщик-завхоз, прачкăсем, производствăна вĕрентекен мастерсем. Ĕçлеме кĕнисене хваттер параççĕ, столовăйра апатлантараççĕ, çăкăр илме ларек пур.

Гитлер пăлхава хутшăннă генералсемпе офицерсене вĕлерет

СУД ПРИГОВОРĔ ТĂРĂХ ПĔР ГЕНЕРАЛ-ФЕЛЬДМАРШАЛА, ВИÇĔ ГЕНЕРАЛА ТАТА ТĂВАТĂ ОФИЦЕРА ÇАКСА ВĔЛЕРНĔ

ЖЕНЕВА, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Берлинра официальнăй йĕркепе çакăн çинчен пĕлтернĕ: Гитлера тапăнас ĕçе хутшăннă çынсене айăплама тунă «Офицерсен сучĕ» Германи çарĕнчен хăваласа кăлармалла тунă 4 генералпа 4 офицера суд тунă. Çак суд фон Вицлебен генерал-фельдмаршала, Геппнер генерал-полковника (Германи çарĕнчен 1942 çултах кăларнăскерне), фон Хазе генерал-лейтенанта, Штиф генерал-майора, генеральнăй штабăн подполковникне Бернардиса, Клаузинг капитана, запасри обер-лейтенанта фон Гагена тата запасри лейтенанта фон Вартенбург графа çакса вĕлермелле тунă.

Приговор йышăннă хыççăн икĕ сехет иртсенех çавсене пурне те çакса вĕлернĕ.

ГЕРМАНИРЕ ПОЛИЦЕЙСКИСЕМ ХАЛĂХА ХУПĂРЛА-ХУПĂРЛА ИЛСЕ ТЫТАÇÇĔ

ЛОНДОН, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçатăн Стокгольм хулинчи корреспонденчĕ шанчăклă вырăнсенчен илтсе пĕлнĕ хыпарсем тăрăх çапла пĕлтерет: Германин çурçĕр-хĕвелтухăçĕнчи районĕсенче çар лагерĕсемпе çар поселокĕсенче полицейскисем нумай тĕлте халăха хупăрла-хупăрла илсе тытнă. Çак ĕçе гестаповецсен тата çар полицийĕн отрячĕсем хутшăннă. Аслă тата кĕçĕн офицерсене чылай тытса хупнă, уйрăмах çар администрацийĕн службинче тăракансене нумай тытса хупнă. Унччен малтан халăха çакăн пекех Германин çурçĕрти районĕсенче, вăл шутра Штеттин, Любек тата Росток хулисенче, хупăрласа тыта-тыта хупнă.

АВСТРИРИ АРЕСТСЕМ

СТОКГОЛЬМ, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Афтонтиднинген» хаçачĕ çапла çырать: июлĕн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле гестапо Австрин паллă деятелĕсене чылайĕшне арестленĕ. Кунта çапла шутлаççĕ: çав çынсем нимĕç генералĕсем Гитлера тапăннă ĕçе тӳрех хутшăннă пуль, теççĕ, е вĕсем, çав тапăнупа усă курса, восстани пуçласа яма хатĕрленнĕ пуль, теççĕ.

ВЕНГРИН ВИÇĔ МИНИСТРĔ ВЫРĂНТАН ТУХНĂ

ЖЕНЕВА, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрири радио пĕлтернĕ тăрăх, Венгри «правительствин» виçĕ министрĕ — экономика министрĕ Имреди («Венгри çĕнелессин» фашистла партийĕн лидерĕ) шалти ĕçсен министрĕ Ярош тата суту-илӳ министрĕ Кундер вырăнтан тухнă.

ФИНЛЯНДИРИ ÇĔНĔ ПРАВИТЕЛЬСТВО

СТОКГОЛЬМ, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсен гитлерла агентстви — Германин информаци бюровĕ саракан хыпарсем тăрăх, паян Хельсинки хулинче Финляндин çĕнĕ правительствине туса пĕтернĕ. Ку правительствăна Финлянди президенчĕ улшăннă май тунă. Çĕнĕ правительствăн премьер-министрĕ—Хакцелль, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ—Энкелль, оборона министрĕ—Вальден генерал, шалти ĕçсен министрĕ — Хиллиля, юстици министрĕ — фон Борн.

Çĕнĕ правительствăна ĕлĕкхи министрсенчен çаксем кĕмесĕр юлнă: премьер-министр пулнă Линкомиес, финанс министрĕ пулнă Таннер, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ пулнă Рамсай, шалти ĕçсен министрĕ пулнă Эрнрут, юстици министрĕ пулнă Лехтонен, çĕрĕç министрĕ пулнă Осара.

АНКАРА ХУЛИНЧЕ ÇУТĂСЕМ ÇУТСАН ТĔТТĔМЛЕТМЕЛЛЕ ТУНĂ

ЛОНДОН, августăн 8-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, августăн 7-мĕшĕнчен пуçласа Турци столицинче çутăсем çутсан тĕттĕмлетмелле тунă.

К. ДИКОМБАЕВ—КИРГИЗ ССР-ĕн ЮТ ÇĔРШЫВ ĔÇĔСЕН ХАЛĂХ КОМИССАРĔ

ФРУНЗЕ, августăн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Киргиз ССР-ĕн Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, Казы Дикомбаев юлташа Киргиз ССР-ĕн Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ пулма лартнă.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Мĕнпур колхозсене, совхозсене, хула çумĕнчи хуçалăхсене тата уйрăм çынсене çакăн çинчен пĕлтеретпĕр: клеверăн, люцернăн, тимофеевкăн, улăхри курăксен тата хăй тĕллĕн ӳсекен курăксен вăррисене Госсортфондăн Чăваш республикинчи пур пункчĕсенче те йышăнаççĕ.

Çитĕннисен республикăри заочнăй вăтам шкулĕ 5—10-мĕш классене заочно вĕренме илесси çинчен пĕлтерет.

Заявленисене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йышăнаççĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 1-мĕшĕччен испытанисем пулаççĕ.

Шкула 15 çула çитнисене тата унтан аслăраххисене илеççĕ.

Заявленипе пĕрле мĕн чухлĕ вĕреннине кăтартакан документ тата хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство ямалла, ответ пама марка чиксе ямалла.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Чернышевского, 5.

Калинино МТС-не çакăн пек работниксем кирлĕ: механик, слесарьсем, токарьсем, тимĕрçĕсем, шофер, бухгалтер, счетовод, секретарь-машинистка, нефтебаза заведующийĕ, сторожсем, хуралçăсем, плотниксем. Ĕçукçи—калаçса килĕшнĕ тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Калинино, Чувашской АССР, директору МТС.

Комплекслă геологи партине ялан ĕçлеме инженер-геологсем, прорабсем, коллекторсем, топографсем, химик-аналитик, бурмастерсем кирлĕ. Снабжени—уйрăм список тăрăх.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. Чернышевского, 6. Тел. 4—18.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 00629 Типография № 1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. ф. 6. 59×12 п. л. Тираж 16.000 экз.